## Смирнова, Н. «...Эп пăртак чăваш ятне çĕклесшĕн...»

К. В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ. Унăн пысăк сцени çинче чăваш халăх поэчĕн П. П. Хусанкайăн портретне вырнаçтарнă. Петр Петрович пирĕн çине - зал енне - тинкерсе пăхнăн туйăнать. Пăхать çеç мар, ун сассине те илтетпĕр эпир. Поэт хăйĕн сăввисене вуланине итлетпĕр. Поэт юбилейне халалланă чаплă уяв каçне ЧР культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министрĕ О. Г.Денисова уçрĕ:

- Чăваш чунне, унăн шухăш-кăмăлне тарăн уçса панă сăвăсен, поэмăсен, ытти произведенисен авторĕ П. П. Хусанкай çуралнăранпа 90 çул çитнине чыслатпăр паян. Хĕвел шевли пек çиçсе тăракан талант вăрçă хирĕнче те, çĕршывăн ытти йывăр саманчĕсенче те хăйĕн пурнăçне çĕршыв шăпипе çыхăнтарса, ăна тĕнче шайне çĕклесшĕн вăйне шеллемесĕр тăрăшнă, - терĕ министр. - Паянхи чыслă уява Мускавран, Киевран, поэт çуралса çитĕннĕ тăрăхран - Тутарстанри Элкел районĕнчен хăнасем килсе çитрĕç.

ЧР Президенчĕ Н. В.Федоров сăмах илчĕ:

- Çав тери пултаруллă, тĕнче шайлă талант П. П.Хусанкай пирки калаçма çăмăл мар. Мĕн тери тĕрĕс, актуаллă, кашни çыншăн кирлĕ сăмахсем:

Малалла-ха пурнăç, малалла.
Эп пăртак чăваш ятне çĕклесшĕн.
Ман юман пулса кашламалла,
Хунавран эп тивĕç пиçĕхмешкĕн.
Малалла-ха, пурнăç, малалла.

Ĕнер те, паян та, ыран та çак сăмахсенчен кам лайăх калама пултарĕ? Никам та. Вăл - Хусанкай. Тĕнчене поэтсем парнелекен халăх нихăçан та пĕтмест. Петĕр Хусанкай çав чи вăйлă поэтсенчен пĕри. "Мĕнле чĕре тапма Пултарнă унăн?" - çапла шутлатăп эпĕ. Хусанкайăн хăйĕнех пур кун çине хурав: "Сейсмограф пулмалла поэт чĕри".

Тăван халăха чунтан юратса çырнă хăйĕн ĕçĕсене поэт, поэт çеç мар - публицист та, философ та, куçаруçă та, эссеист та... Нумай-нумай ыррине çеç калама пулать Петĕр Хусанкай пирки. Эпĕ хамăн сăмахăма çапла вĕçлесшĕн: пирĕн пурнăç кĕске. Петр Петрович та сахал пурăннă. Пурнăç кĕске - искусство ĕмĕрлĕх тенĕ аслисем. Петĕр Хусанкайăн сăввисем те ĕмĕрлĕхе.

Николай Васильевич çавăн пекех П.Хусанкайăн палăкне хатĕрлес енĕпе конкурс ирттересси тата поэтăн 6 томлă I çырнисен пуххине 1999 çул тĕлне пичетлесе кăларасси пирки кăларнă Хушупа паллаштарчĕ.

Тутарстанри Элкел район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ М. М. Сафин хăйĕн ентешĕн пултарулăхне, унăн ĕçĕсене пысăка хурса хаклани пирки пĕлтерчĕ. Сумлă поэтăн тăван ялĕн - Сиктĕрмен паянхи пурнăçĕпе, ун çыннисен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ. Петĕр Хусанкай ӳснĕ, çитĕннĕ тавралăха сăнарланă кар-инăна, ялти шкул территорийĕнчен илсе килнĕ тăпрана - Чăваш наци музейне парнелерĕ.

Петр Иванович Кочетков Мускавра пурăнать. Анчах Петр Петрович Хусанкайпа çывăх, туслă пулнă вĕсем. Унăн сăввисене вырăсла куçарнă.

- Енчен те паян Раççейĕн ХХ ĕмĕрĕнчи поэтсен рейтингне ирттерес пулсан, Петр Петрович Хусанкай ячĕ чи малтисен шутĕнче пуласси пирки иккĕленместĕп. Раççей нихăçан та поэтсенчен чухăн пулман, анчах Хусанкай пек пултаруллисем - шутпа. XXI ĕмерте те пурăнĕ вăл. Чăваш Енре çеç мар, Раççейре те. Вырăс, ытти халăхсен культурине питĕ лайăх пĕлетчĕ юлташăм. Эпир, вырăс поэчĕсем, вăл вырăс классикĕсен поэмисене пăхмасăр вуланисене ăмсанса итлесе лараттăмăр, - çапла ăшă туйăмпа аса илчĕ ĕçтешĕ пирки П. Кочетков.

Чăваш халăх поэчĕн Г. Ефимовăн та, Украинăран килнĕ ентешĕн П. Чичкановăн та, ЧР Писательсен союзĕн ертçин Хв. Агиверĕн те, Красноармейски район администрацийĕн пуçлăхĕн С. Николаевăн тата ыттисен те Петĕр Хусанкай çинчен аса илнĕ сăмахĕсем хăйне май интереслĕ пулчĕç, залра ларакансем нумайлăха асра тытĕç вĕсене.

Петр Петрович Хусанкайăн ывăлĕ Атнер Петрович мĕнле хаклать-ха, йышăнать-ха ашшĕн ĕçĕсене?

- П. П. Хусанкайăн пултарулăхне тепĕр хут тишкерме тапратсан, унăн поэзийĕнчи тĕп ыйтусем пирки шухăшлама тытăнатăн. Хуравĕсене вĕсен сăввисенчех тупатăн. Ваттисен сăмахĕ: "Чăваш ятне ан çĕрт" тени Хусанкай философийĕнче, шухăшлавĕнче хăйне евĕрлĕ янăрать. Эпир тĕнче умне чăваш философийĕпе, чĕлхипе, куçĕпе, пуçĕпе, сăн-сăпачĕпе тухасшăн. Çав вахăтрах пирĕн тĕнче çитĕнĕвĕпе те паллашмалла. Çакăн пек шухăшсем пур ман аттен ĕçĕсенче. Вăл "... пăртак чăваш ятне çĕклесшĕн" çын пулнă.

Савăнăçлă лару хыççăн кăтартнă концертра Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай çырнă сăвăсем, ун сăмахĕсемпе хывнă юрăсем янăрарĕç. Раççей тава тивĕçлĕ артисчĕсем Г. Терентьев, Е. Никитин тата, паллах, поэтăн мăшăрĕ В.

Кузьмина вуланӑ сӑвӑ йӗркисем уйрӑмах чуна пырса тиврӗҫ. Ҫапла тата темиҫе вун-вун ҫултан та поэтӑн "Тилли юррисем» , ытти ӗҫӗсем паянхи пекех янӑраччӑр.

Кӑрлачӑн 22-мӗшӗ. Кӑнтӑрла иртсе виҫӗ сехет. Чӑваш Енӗн тӗп хулинчи П. П. Хусанкай ячӗллӗ культура керменӗ умӗнчи Ҫӗнтерӳ паркӗнче митинг иртрӗ. Чӑваш халӑх поэчӗ, Константин Иванов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх, Ҫеҫпӗл Мишши ячӗллӗ премисен лауреачӗ П. П. Хусанкай палӑкӗ пулас вырӑна асӑну чулӗ хывнӑ ятпа. Ӑна ЧР Президенчӗн Администрацийӗн ертуҫи П. С. Краснов уҫрӗ. Юрий Сементер поэтпа Петӗр Хусанкайӑн мӑнукӗ - Петӗр Хусанкай-кӗҫӗнни - чул ҫинчи ҫивиттие сирсе илеҫҫӗ. Чул ҫине ҫапла  ҫырнӑ:  "Ҫак вырӑнта Чӑваш халӑх поэчӗ Петӗр Хусанкай /1907-1970/ палӑкне лартма палӑртнӑ."

Тутарстанри Элкел район администрацийӗн ертӳҫин ҫумӗ М. Сафин, Петр Петрович ҫуралса ӳснӗ тӑрӑхӑн - Сиктӗрме ял администрацийӗн ертӳҫи О.Мурзин поэт вӗреннӗ шкул территорийӗнчен илсе килнӗ тӑпрана чул тавра сапрӗҫ. Украина культурин тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, ЧР тава тивӗҫлӗ художникӗ П. Чичканов мухтавлӑ поэтӑмӑр ҫинчен ӑшӑпа асӑннӑ май ун сӑввисене украинла вуларӗ. Ҫавӑн пекех Мускавран килнӗ хӑна, ЧР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, Хусанкай ҫемйин юлташӗ В. Кочетков, Ю. Сементер сӑвӑҫ сӑмах илчӗҫ.

Паянхи ҫамрӑксен, поэт ӗҫне малалла туса пыракансен ячӗпе М. Карягина сӑвӑҫ сӑмахӗ вырӑнлӑ: "Петр Петрович! Эсир кунтах. Сӑмахӑма Сире калатӑп. Сирӗн йӗрӗрсене палласа утатӑп. Сирӗн хӑватӑр - манра, ҫамрӑксенче. Чӑваш ачисем эсир ҫырнӑ "Сӑпка юррипе" ҫывӑрма выртаҫҫӗ. Сирӗн халалӑрпа ҫитӗнеҫҫӗ".

Петӗр Хусанкайӑн ывӑлӗ - Атнер Петрович - ашшӗн асӑну чулне туянма, хатӗрлеме, вырнаҫтарма пулӑшнӑ А. Мирхолова /СПМК-36/, Г. Волкова / Тимӗр-бетон изделийӗ" АО/ чӗререн тав турӗ.

*Хыпар. – 1997. – 24 кӑрлач.*